Чăваш Республикин Етĕрне районĕнчи муниципаллă бюджетлă
пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕ
«А.П.Айдак ячĕллĕ Тури Ачакри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул»

Сценарисен «Чăвашла уяв янратăр» конкурса

«Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче ирттерекен уявсем» номинацие

# Кайăксем – пирĕн туссем

( 6 класра вĕренекенсемпе ирттермелли класс сехечĕ)



**Ĕçе тăваканĕ:** чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен
Максимова Галина Владимировна

**Умĕн калани.**

Çут çанталăк пурлăхĕпе, унăн пуянлăхĕпе эпир кулленхи пурнăçра анлă усă куратпăр. Вăл çыншăн чи кирли, çавăнпа çамрăк ăрăва çут çанталăка юратма, ăна хӳтĕлеме, упрама вĕрентесси – воспитани ĕçĕнчи кашни çыннăн пысăк тивĕçĕ. Тăван тавралăха юратакан, унăн пурлăхĕпе пĕлсе усă куракан кăна культурăллă, ăслă, яваплă çын пулать. Ачасене тĕрĕс çитĕнме пулăшакан пархатар – хăй пурăнакан тавралăхпа, çут çанталăкпа тĕплĕн паллаштарни, сăнама, танлаштарма, пĕр пулăмпа теприн хушшинчи çыхăнăва курма, пĕтĕмлетӳ тума хăнăхтарса пыни аван. Шăпах çак тĕллеве пурнăçлать те ĕнтĕ 6 класра вĕренекенсемпе ирттернĕ класс сехечĕ.

**Тĕллевсем:**

1.Хамăр таврари кайăк-кĕшĕксен пурнăçĕпе кăсăклантарса ярасси, вĕсем çинчен ытларах пĕлес килекен туртăма вăйлатасси.

2.Тăван тавралăха юратма, ăна упрама, тĕпчеме, сăнама вĕрентесси.

**Кирлĕ хатĕрсем:**

Кайăксен сассисем, ӳкерчĕкĕсем, презентаци.

**Усă курнă литература**

Н.И.Сладков. Вăрман пурнăçĕ. Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви. 1991ç.

**Вĕрентекен сăмахĕ:**

Ученăйсем палăртнă тăрăх, пирĕн çĕр - шыв территорийĕнче 700 тĕрлĕ кайăк пурăнать. Вĕсем этемĕн çывăх тусĕсем, пулăшаканĕсем. Кайăксем пулмасан таврари вăрмансене, пахчасемпе садсенчи çимĕç паракан йывăççсене, уй-хирти тыр-пула тĕрлĕрен хурт-кăпшанкă пĕтерсе хума пултарать. Пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса кайăксем ӳсен-тăран вăррисене таврана сарма пулăшаççĕ. Чылайăшĕ хăйсен илемлĕ сассипе савăнтараççĕ. Çавăнпа та кайăксене упрамалла, кирлĕ чухне пулăшма пĕлмелле.



Хамăр таврари кайăксем çинчен питĕ сахал пĕлетпĕр-ха эпир. Хушăран кăна асăрхатпăр вĕсен тĕлĕнмелле пурнăçне. Паянхи класс сехетĕнче эпир шăпах хамăр тăрăхри кайăксен пурнăçĕпе паллашăпăр. Сăнама, курма пĕлсен вĕсен пурнăçĕнче интересли питĕ нумай. Тĕслĕхрен, хĕл кунĕнче, тĕрĕсрех каласан нарăс уйăхĕнче, чĕпĕ кăларакан кайăк çинчен пĕлетĕр-и эсир? Кукăрсăмса ятлă вăл. Чĕпписем мĕнле чăтаççĕ-ши тетĕр-и? Итлесе пăхар-ха апла çак тĕлĕнмелле кайăк çинчен.

**1-мĕш вулакан:**

**Кукăрсăмса (клест)**

Çуралнă кун – пуриншĕн те савăнăçлă, телейлĕ кун. Кукăрсăмсашăн вара – инкек. Хĕл варринче çăмартана шăтарса тухнинче, чăнах та, мĕн савăнăçĕ пултăр вара. Шартлама сивĕ – эсĕ çаппа-çарамас, ĕнсе çинче кăна кăшт тĕк тухнă.

Ытти кайăксем чĕпписене ăшă çу кунĕнче, апат çителĕклĕ чухне кăлараççĕ. Кукăрсăмса нарăсăн çирĕм тăххăрмĕшĕнче кăларать. Мĕнле телейлĕ кун пултăр вăл тăвату çулта пĕрре килекен нарăсăн çав кунĕ? Хуть выртса йĕр, симĕс курăк та çук, хурт-кăпшанкă та çук.

Кукăрсăмсасем çинчен ăна эпир çапла шутлатпăр. Кукăрсăмсасен чĕпписем хăйсем пĕрре те нăйкăшмаççĕ! Вĕсем пăтă çиеççĕ! Чăрăш йĕкелĕн вăрринчен пĕçернĕ тутлă пăтă çисе тăранаççĕ те çывăрма выртаççĕ. Йăвара аялта – мамăк, çиелте каллех мамăк вителĕк евĕр – амăшĕ. Шалтан пăтă



ăшăтать. Чăрăш йывăççи кукăрсăмса чĕпписене сăпкари пек ярăнтарать, çил юрă юрлать…

Çук çав, çуралнă кун, кирек мĕн калăр та, яланах телейлĕ кун. Хĕллехи шартлама сивĕре çуралсан та. Нарăсăн çирĕм тăххăрмĕш кунĕ пулсан та. Пурпĕрех!

**Вĕрентекен сăмахĕ:**

*Кайăк-кĕшĕксем хитре юрланине пĕлетпĕр-ха эпир. Уйрăмах çуркунне вĕсен илемлĕ юррипе киленетпĕр. Юрланипе çеç хырăм тăранмасть-çке. Мĕн çисе вăй пухаççĕ-ши вĕсем?*

*Вĕсен те апат çимелли вырăнĕсем пур иккен.*



**2-мĕш вулакан:**

Эпĕ – кайăксен хуçи!

Кирлĕ пулсан кайăксем хăйсемех ман пата вĕççе килеççĕ. Çук, эпĕ ăрăмçă мар, ăрăмçăламалли вăрттăн сăмахсем те, патак та çук манăн. Ун вырăнне асамлă сентре пур! Пăхмашкăн сентрийĕ питĕ ансат. Айккисенчен хăма çапнă ахаль фанера çеç. Анчах та çав сентрен ăрăмçă вăйĕ пур.

Юрĕ, вăрттăнлăхне уçса парам эппин! Вара сирĕн пата та темĕнле кайăк та вĕççе килĕ. Фанерăран тунă сентре çине кĕрпе е çăкăр хытти çеç хумалла. Сентрине çавăн хыççăн чӳрече умне çакса хумалла. Сентре асамлă пулса тăрать те, ун çине тĕрлĕ кайăксем вĕççе килме пуçлаççĕ.

Енчен те эсир ялта е вăрман çывăхĕнче пурăнатăр пулсан сентре çине хĕвел çаврăнăш сапăр, сысна çăвĕ касса хурăр – вара унта кăсăясемпе шăван кайăксем те килеççĕ. Пилеш çупкăмĕ çаксан уйăпсемпе шăхăрчăксем те вĕççе çитеççĕ.



Çавнашкал асамлă сентре тăвăр та, эсир те кайăксен хуçи пулса тăратăр.

**3-мĕш вулакан:**

Ачасем кайăксене йĕкĕлтеме юратаççĕ. Куккук пек авăтаççĕ, кăвакал пек нартлатаççĕ, курак пек кăшкăраççĕ. Анчах тĕнче тем тĕрлĕ сасăпа, тем тĕрлĕ юрăпа тулса ларнă та – хăш кайăкĕ мĕнле юрланине ăнланса илме те çук. Çăхан вĕçет те кранк! кранк!

тесе кăшкăрать. Тăмана у-у-у тесе шарт сиктерет, кăсăя тĕмсем хушшинчен чиньк! чиньк! тенĕ евĕрлĕ сас парать. Тепĕр кайăкĕ тата ывăна пĕлмесĕр вĕçĕ-хĕррисĕр ĕçле-ĕçле, çи! ĕçле-ĕçле, çи! тесе юрлать. Хирти пилеш кайăкĕ талпиçен çине ларнă та: «Ха, чечек! Ха, чечек!» - тесе тĕлĕнет.



**Вĕрентекен сăмахĕ:**

*Ачасем, кашни кайăкăн хăйĕн юрламалли вăхăчĕ пурри çинчен пĕлетĕр-и эсир? Миçе сехетре юрламаллине мĕнле пĕлеççĕ вара вĕсем?*

*Ан кулянăр, вĕсен хăйсен сехечĕ, кайăк сехечĕ пур!*

**4-мĕш вулакан:**

Кайăксем камăн хăçан юрлас килет, çавăн чухне мар, юрламалли вăхăчĕ çитсен тин юрлаççĕ. Пĕрисем хĕвел тухсан çав-çав вăхăтра, теприсем хĕвел тухиччен çав-çав вăхăтра. Кашни кайăкăн юрламалли хăйĕн вăхăчĕ пур.

Шур качаки нăрăлтатрĕ, апла пулсан виçĕ сехет çитнĕ ĕнтĕ. Акă куккук та авăтма пуçларĕ, часах хĕвел тухмалла. Юрлакан пилеш кайăкĕ чăрăш тăрринче шăхăрса ларать, тăватă сехет çитет. Вĕлтрентăрри хыр çинче юррине янраттарса ячĕ – часах пиллĕк çитет.



Сехечĕсене пăрмалла та мар, юсамалла та мар, тĕрĕслемелле те мар. Шыв та каймасть вĕсене, ўксе те çĕмĕрлмеççĕ. Чăнах та ĕнтĕ, хăш-пĕр чухне кăштах тĕрĕс мар кăтартаççĕ, анчах мĕнле сехет ан йăнăштăр. Ун вырăнне яланах хăвăнпа пĕрле – манса хăварасран, çухатасран хăрамалли çук.

**Вĕрентекен сăмахĕ:**

*Çуркунне çитсен кăнтăра вĕçсе кайнă кайăксем пирĕн пата каялла таврăнаççĕ. Вăл вăхăтра вĕсен ĕç питĕ нумай: йăва çавăрмалла, çăмарта туса чĕпĕ кăлармалла…*

*Унччен малтан мăшăр шырамалла, çавăнпа та çуркунне кайăксем юрлаççĕ çеç мар, ташлаççĕ те.*

**5-мĕш вулакан:**



Кашни кайăк хăйне майлă ташлать. Карăксем хăйсен туйĕнче тĕкĕсене тăратса çаврăнаççĕ, сиккелесе илеççĕ, çуначĕсене çапкалаççĕ. Шăнкăрчсем, дирижерланă евĕр, çуначĕсене сараççĕ. Аистсем пуçне мăйĕ çине çавăрса хураççĕ те сăмсипе шăкăртаттараççĕ. Шурлăх кайăкĕ пĕшкĕне-пĕшкĕне ташлать.

Тăрнасем вара акă çапла ташлаççĕ.

Вĕсем вăрманта çын çӳремен пĕр-пĕр улах шурлăха пуçтарăнаççĕ. Тăрна балне ертсе пыраканĕ пур. Вăл пуринчен те çĕкленӳллĕрех, пурне те вырăнтан тапратать, вĕрилентерет. Ăна курса ыттисем те пĕр-пĕрин умĕнче сиккелеме тытăнаççĕ, пĕшкĕнеççĕ, пуç таяççĕ, çуначĕсене çапаççĕ. Ку вăл шурлăх тăрăх ахаль утса çӳрени мар, шапа тытнă чухнехи пек сикни те, вĕçес умĕн çуначĕсене хускаткалани те мар, çинçе урисем халь вĕсен пач урăхла хуçланкалаççĕ, вăрăм мăйĕсем пач хăйне майлă авăнаççĕ, тĕссĕр çуначĕсем те урăхла çапкаланаççĕ.

Ку вăл – уйрăм ташă - çуркуннехи ташă.

Авă хĕвел тухрĕ, шурлăх çинчен тĕтре хусканса çĕкленчĕ, халĕ ĕнтĕ унта тăрнасем мĕнле ташлани пурне те курăнать.

Илемлĕ ташлаççĕ тăрнасем!

**Вĕрентекен сăмахĕ:**

*Кайăксен пурнăçĕ хăш-пĕр çынсене çăмăл пек туйăнать пулĕ. Анчах та шухăшлама, сăнама пĕлсен* ***кайăксен хуйхи-суйхи мăй таран****!*

**1-мĕш вулакан:**

Чи кирли - шанчăклă та çирĕп, ăшă йăва çавăрмалла. Вăхăтра çăмарта тумалла, пусма лармалла. Чĕпписене кашни кун тăраничченçитермелле. Лешсем вара, чăннипех те, тĕпсĕр хырăмлă - çăварĕсене карса çеç лараççĕ. Кун каçиччен апат йăта-йăта çуната çĕклейми пулса çитетĕн. Кашни кун çирĕм сехетрен сахал мар ĕçлетĕн. Шăнкăрч кун каçиччен хăйĕн чĕпписене ик çĕр хут çитерет, шăна тытакан



чăпар кайăк – пилĕк çĕр хут!

Чĕпĕсене вĕçтерсе ярсан кайăксен çĕнĕ хуйхă-суйхă пуçланать: пытанма вĕрент, апат тупма вĕрент, вĕçме вĕрент. Тăшмансенчен сыхла.

Кайăксем хăйсен чĕпписене тĕрлĕ меслетпе хăтараççĕ. Ăсан чееленет: тăшманне курать те чирлĕ е аманнă пек тăвать. Кăрăпчак хăйĕн чĕпписене чĕрнепе йăтса тарать. Шыв кайăкĕ чумкка - çурăмĕ çине хурса. Кирлĕ пулсан чĕппипе пĕрлех шыва та чăмать.

Пĕр кайăк çеç хăйĕн чĕпписене тăрантармасть, вĕрентмест, хӳтĕлемест – куккук. Çăмартине ют йăвана хурса хăварать те – нимле хуйхă-суйхă та çук. Хăйĕн ачисене куçпа та курмасть.

**Вĕрентекен сăмахĕ:**

*Ĕçлесе ывăннă хыççăн кайăксем те çывăрма выртаççĕ. Анчах та ăçта-ши вĕсен çывăрмалли вырăнĕ?*



**2-мĕш вулакан:**

Çулла кашни тĕм айĕ – тăван кил. Хĕлле юр айĕнче çывăрма пулать, юра ахальтен мар шурă вителĕк теççĕ. Шурă вителĕк айĕнче, юр айĕнче, хĕл каçичченех карăксем, пăчăрсем, ăсансем, хир чăххисем çĕр каçаççĕ. Кăвакарчăнсем – мачча çинче, çерçисем – карнис айĕнче. Чанасем … мăрьере те çĕр каçма пултараççĕ. Паллах, кăмакине хутмасан. Çерçисем чăрăш лăсси çинче çывăраççĕ. Уйăпсемпе шĕшпĕлсем шартлама сивĕре çĕр каçма утă капанĕ е улăм ури ăшне кĕрсе выртаççĕ. Улатаккасем, кăсăясем, шăван кайăксем хăвăлсенче ыйхăлаççĕ. Çанталăк мĕн чухлĕ сивĕ, çывăрмалли вырăн çавăн чухлĕ шанчăклăрах пулмалла.

**Вĕрентекен сăмахĕ:**



*Кайăксем çинчен çакăн чухлĕ пĕлнĕ хыççăн вĕсен пурнăçĕ çăмăл тесе калама пулать-ши, ачасем? Çук, паллах. Вĕсем пире усă тăвас тесе те сахал мар тăрăшаççĕ терĕмĕр. Апла пулсан пирĕн те вĕсене пултарнă таран пулăшма тăрăшмалла. Мĕн тумалла-ши пирĕн?*

*Çапла, хĕлле сырăшсем çине çимелли хурса памалла, çуркунне валли шăнкăрч йăвисем ăсталамалла… Чи кирли – кайăксене хăйсен ĕçне тума чăрмантармалла мар.*

*Мĕн тери ĕçчен вĕсем, кайăксем. Хăшĕ-пĕрисен пурнăçĕпе тĕплĕнрех паллашар-ха?*

**3-мĕш вулакан:**

Çĕмĕртлĕхре **шăпчăк (соловей)** юрлать. Пĕр чарăнмасăр, янăравлăн та çивĕччĕн юрлать. Çав тери илемлĕ те янăравлă юрланипе çумри курăк çулçисем чĕтренсе илеççĕ, шăпчăкăн хĕрсе кайнă вĕри пырĕнчен вара ăшă пăс тухать.



Çав пăс çине вăрăмтунасем вĕçсе килеççĕ, анчах хулăн тĕк витĕр вĕсем сăхаймаççĕ. Çавăнпа уçă çăварĕ патĕнче нăйлатаççĕ. Çăвара хăйсемех кĕресшĕн, чĕлхе çумне хăйсемех çыпçăнаççĕ!

Шăпчăк чакклаттарса юрă юрлать, чаклаттарсах вăрăмтунасене те çăтать. Икĕ ĕç харăс тăвать. Пĕри теприне ним чухлĕ те чăрмантармасть.

Шăпчăка юрă тăрантармасть тесе калаççĕ - ха тата!

**4-мĕш вулакан:**

**Кăсăяна (синица)** ахаль кайăк тени мана пачах та килĕшмест. Мĕншĕн тетĕр-и? Тахçан асатте каласа панăччĕ…

Пĕррехинче кăсăя читлĕхе лекнĕ. Алăпа тытнă-тытманах вăл … вилсе кайнă. Халь кăна чĕрĕччĕ, читлĕхре вĕçетчĕ, тытсанах вилсе кайнă. Кăсăя урисене тăратса месерле выртнă та пач хускалман. Хура куçне шурă карă карса илнĕ. Тытса тăнă-тăнă та асатте çапла тункатa çине хунă. Пĕр утăм айккине пăрăнма ĕлкĕрнĕ çеç - кăсăя чĕрĕлнĕ, чĕвĕлтетсе илнĕ, вара вĕçсе кайнă!



Çынна çавнашкал улталама пултарать пулсан ăçтан ахаль кăсăя пултăр вăл? Вилес тет – вилет, чĕрĕлес тет – чĕрĕлет!

Чăнах та ёнтĕ, çурăм çине вырттарсан чылай кайăк самантлăха темле вилнĕ пек туйăнать. Анчах кăсăясен çакă никамăннинчен те лайăхрах пулать. Çапла туни вĕсене час-часах читлĕхе лекессинчен хăтарать.

**5-мĕш вулакан:**



**Куккук (кукушка)** тĕлĕнтермĕш кайăк. Пĕртен-пĕр куккук çеç йăва тумасть, чĕпписене тăрантарса ӳстермест. Мĕншĕн тесен çу каçиччен вăл икĕ теçеткене яхăн çăмарта тăвать, çавăн чухлĕ чĕпĕ пĕр куккук ăçтан ӳстерейтĕр? Çăмартисене тĕрлĕ вăхăтра тăвать. Вĕсене пусма ларса кăларас пулсан йăвара пĕр вăхăтрах чĕпĕсем те, çăмартасем те пулмаллаччĕ-и? Ун пек чухне кайăкăн мĕн тумалла-ха: чĕпĕсене те тăрантармалла, пусма та лармалла-и? Ун пек пулма пултараймасть.

Çавна пула хăйĕн çăмартисене куккук ют йăвана хурса хăварать те ёнтĕ.

Питĕ нумай вĕтĕ кайăк йăвинче куккук çăмарти тупма пулать. Хăвăлри кайăк йăвинче те тупма пулать ăна. Çĕр çине ларса çăмарта тăвать те сăмсипе хыпса ăна хуллен хăвăла хурса хăварать.

Авă мĕнле кайăк вăл – куккук!

**1-мĕш вулакан:**

**Шăнкăрч (скворец)**



Чĕкеç юррипе кун пуçланать, шăпчăк юррипе кун вĕçленет. Чĕкеçпе шăпчăк хушшинче шăнкăрч юрлама юрататать. Шăнкăрч юрринче мĕнле кăна кайăк сассине илтместĕн пулĕ: унта чĕкеç сасси те, шăпчăк сасси те, ытти нумай кайăк сасси те пур.

Çакă никама та тĕлĕнтермест. Шăнкăрч виртле кайăк иккенне пурте пĕлеççĕ.

**2-мĕш вулакан:**

**Çерçи (воробей)**

Хĕл каçиччĕнех ял çерçийĕ кивĕ кăмака мăрйинче пурăнать. Çурхи юр ирĕлсе тумлама пуçласан вăл ăна тăраниччен ĕçет те савăннипе сиккелет, чĕриклетет. Иртсе

пыракан çынсем чарăнса тăрсах кулаççĕ. Çапла чĕриклете-чĕриклете вĕсем çурхи куна ăсатаççĕ. Кашни кун каç пулас умĕн пухăнаççĕ, кашни каç ушкăнпа чĕриклетеççĕ. Иртен-çӳренсем вĕсем çине пăхса çерçисем те мĕн тери хитре юрлаççĕ тесе тĕлĕнеççĕ.



**Вĕрентекен сăмахĕ:**

*Ачасем, эпир паян хамăр тăрăхри кайăксен пурнăçĕн хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсемпе паллашрăмăр. Кайăксене сыхлассине кашни çыннăн хăйĕн тивĕçĕ вырăнне хумалла.*

*Шкултан таврăнатăр-и е уçăлса çӳретĕр, çут çанталăка сăнама, тĕпчеме манса ан кайăр.*

*Куçу мĕн кăна ан куртăр, хăлху мĕн кăна ан илттĕр – пурте тĕлĕнтерет, пуринче те темле вăрттăнлăх пур. Йĕри-тавра мĕн пурри йăлтах тĕлĕнтермĕшсенчен тăрать. Çакă тĕлĕнмелле тĕнче çине çавăнпа тĕлĕнсе пăхатпăр та ĕнтĕ эпир.*

*Ачасем, çут çанталăка упрар!*